Юбилейсем

50 çул алла-аллăн

Ылтăн туй – питĕ сумлă уяв. Ылтăн яланах çăмăл мар ĕçре пысăк çитĕнŭ тунине палăртнă. Çапла ылтăн туй та – çур ĕмĕр хушши икĕ çын пĕрле «ĕçлесе» пынин тухăçĕ, вĕсем хăйсен пысăк юратăвне упраса пурăнни.

Иван Григорьевич Ашмарин протоиерейпа Дарья Николаевна матушкан пĕрлехи пурнăç çулĕ çинчен те çакнах каламалла. Иккĕшĕ те нумай ачаллă çемьере ŭснĕрен, пĕчĕкренех ĕçе юратма вĕреннĕ, чăтăмлă пулнă. Ачаранах тата тепĕр пĕр пек ен те пулнă вĕсен: православи тĕнĕ патне чĕререн туртăнни тата çамрăксене Турра ĕненме пулăшни.

Иоанн атте часах вулама вĕреннĕрен ултă çулта хăйĕн пиччĕшĕпе шкула çŭреме тытăннă. Арçын ача ултăмĕш класра вĕреннĕ чухне 1946 çулта ялта чиркŭ уçаççĕ. Вăл чиркŭре юрлама вĕренсе çитет. Унта ытларах хĕрарăмсемпе хĕр ачасем çŭренĕрен, Иоанн хĕрсене те чиркŭ хорĕнче юрлама вĕрентет. Тепĕр виçĕ çултан псаломщик та пулать. Çапла чылай вăхăт хушши 30 хĕрпе 10 яшран тăракан чиркŭ хорне ертсе пырать. Çак вунă яшран 9-шĕ каярах священник пулса ĕçлеме пуçлаççĕ.

Пурнăç çулĕ Иоанн аттене Елчĕк районне илсе çитерет. Шăпах çавăнти чиркŭ хорĕнче юрлакан Дарья ятлă хĕрпе паллашать те. 1959 çулхи июлĕн 21-мĕшĕнче çамрăк мăшăр венчет тăрать. Хыççăн ял Советĕнче çырăнаççĕ. 50 çул ĕнтĕ унтанпа вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Çуратса ŭстернĕ çичĕ ачи те ашшĕ-амăшĕн утăмĕсемпе кайнă: пĕрисем – священниксем, теприсем республикăри тĕрлĕ чиркŭ хорĕсенче юрлаççĕ.

Ĕç çапла ыйтнăран, Дарья Николаевнапа Иоанн атте çемйи Елчĕк, Патăрьел, Шăмăршă, Çĕрпŭ районĕсенче пурăнать. 1991 çулта Мăн Сĕнтĕрти чиркĕве юсаса çĕнетнĕ хыççăн, кунта пурăнакансем Варнава архиерейран ыйтнипе, Иоанн аттене чиркŭ настоятелĕ пулма суйлаççĕ. Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕ хăйĕн капăрлăхĕпе те, унта иртекен службăсемпе те таврари çынсемшĕн илĕртŭллĕ

пултăр тесе вăл старостăпа пĕрле нумай тăрăшать. Дарья матушка вара пур ĕçре те унăн пĕрремĕш пулăшаканĕ пулнă: хорта юрлать, просвирсем хатĕрлет, çуртасем те сутать... Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче çеç мар, районĕпех ырă ятлă пулса тăчĕ çак мăшăр.

Ылтăн туйпа саламласа сывлăх сунма вара вĕсем патне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та çитрĕ. Уяв кĕрекинче ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Данилов, «Росгосстрах – Чувашия» Муркашри уйрăмĕн ертŭçи В. Вязов тата ыттисем те хисеплĕ мăшăра малалла та килĕштерсе пурăнма вăй-хал сунчĕç.

С. СОКОЛОВА,
Мăн Сĕнтĕрти тĕслĕх библиотека заведующийĕ.

Киле килсех чыс турĕç

Вăхăт сиккипех чупать çав. Турай ял тăрăхĕнчи Мăн Токшикре пурăнакан Клавдия Николаевнапа Павел Егорович Егоровсем тин çеç пĕрлешнĕ пекчĕ. Нумаях пулмасть вĕсем çемье чăмăртанăранпа 60 çул та çитрĕ. 6 ача çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларчĕç. Павел Егорович - вăрçă ветеранĕ. 1943 çулта вăрçă вутне кĕнĕскер, тăван яла Аслă Çĕнтерŭ хыççăн 4 çултан çеç таврăнчĕ. Ĕмĕр тăршшĕпе мĕн кăна ĕçлемерĕ пулĕ. Тракторпа суха турĕ, вырма вăхăтĕнче комбайн çине ларатчĕ. Арманта 15 çул вăй хучĕ мăшăрĕпе пĕрле. Çак кунсенче вăрçа Белоруссире пуçласа кĕнĕ салтака «Беларусь Республикине нимĕç фашист захватчикĕсенчен хăтарнăранпа – 65 çул» медальпе наградăларĕç. Районти социаллă хŭтлĕх пайĕн ертŭçи Н.П. Петрова шур çŭçлĕ ветерана тата та нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунчĕ. Районти информацип художество ушкăнĕ илемлĕ юрăсем парнелерĕ ватă салтака. Киле килсех çапла чыс тунăшăн ветеран кăмăллă юлчĕ.

Хамăр инф.

Ялти ятлă çынсем

Тава тивĕçлĕ агроном

Çĕр ĕçченĕ, Ленин орденĕн кавалерĕ, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн тĕп агрономĕнче вăй хунă Еннафа Алексеевна Ильина ыран 85 çул тултарать.

Унăн ашшĕ, Георги хĕреç кавалерĕ А.И. Ильин, Муркаш райпо правленийĕн пĕрремĕш председателĕ пулнă.

1923 çулта Шурчара пурăнакан Алексей Ильин хăйсен ялĕнчи Варварипе çемье çавăрать.

1924 çулхи август уйăхĕ. Халăх уйра тырă вырать. Варвари апат леçме кайма тухнă. Çамрăк мăшăр кĕтнĕ пепке хăй çут тĕнчене килесси çинчен пĕлтерет. Пулас ача амăшне çавăнтах лашапа больницăна леçеççĕ. Илем кунĕ пулнăран арçын ача çураласса кĕтнĕ. Ячĕ, паллах, Илья пулмалла пулнă. Анчах хĕр ача çут тĕнчене килнĕ. Ăна вара Еннафа ят панă.

Ильинсен туслă çемйинче пурăна киле тепĕр хĕр, унтан икĕ ывăл тата тепĕр хĕр çуралнă.

Еннафа Шурча шкулĕнче 7 çул вĕренет. Унтан Муркаш шкулĕнче пĕлŭ пухать. Вăрçă тухсан 9-мĕш класс хĕр ачи Сăр хĕрне окопсем чавма кайнине лайăх астăвать.

Пурнăçĕ çăмăл пулман. Иртнине аса илнĕ май ассăн сывлать хисеплĕ ветеран. Пирĕн каласăва Еннафа Алексеевнан йăмăкĕ Вера Алексеевна (çемьере чи кĕçĕнни) хутшăнать. Ăна та

районта пĕлмен çын сахал. Аппăшĕ пекех вăл ырми-канми ĕçленипе ырă ят çĕнсе илнĕ. Вера Алексеевна Муркаш больницинче хĕрĕх çул терапевтра вăй хунă.

Сăмах май каласан, Еннафа Алексеевнан хĕрĕ Альбина Алексеевна та паян Муркаш больницинче терапевтра ĕçлет. Ăна та ял çыннисем хисеплеççĕ.

Вуннăмĕш класран вĕренсе тухсан агроном пулас ĕмĕтлĕ хĕр ача Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрет. 1947 çулта алла диплом илнĕ хыççăн вăл тăван района таврăнать. Малтанхи çулсенче районти колхозсенче агрономра ĕçлет. 1949 çулта ăна парти райкомне чĕнтереççĕ. Районăн тĕп агрономĕ пулма çирĕплетеççĕ.

- Ун чухне районта 86 колхоз пулнă, - аса илет Еннафа Алексеевна, - хуçалăхсене лашапа çŭреттĕмĕр.

1953 çулта Муркаш ял Совет территорийĕнчи колхозсем пĕрлешсен, парти райкомĕ сĕннипе, Е.А. Ильинана «Знамя труда» колхоза ĕçлеме яраççĕ. Хуçалăх пĕрлешнĕ кăна, вăйсăр. Çавăнпа та çĕр ĕçĕпе опыт пур çынсем кирлĕ пулнă.

Чăнах та, Е.А. Андреев председательпе Е.А. Ильина агроном пĕр чĕлхе тупса колхоза аталану çулĕ çине кăараççĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышланса пынăран органикăллă удобрени чылай хатĕрлеме тытăнаççĕ. Çĕр улми туса илессипе ĕçлеме пуçлаççĕ. Ăна колхозĕпе 220 гектара çитереççĕ.

Çĕр улмие сухапуçĕпе лартнă. Аммиак шывĕ питĕ тухăç паратчĕ. (Муркаш ялĕ çывăхĕнче çав цистернăсем халĕ те лараççĕ.) Çум курăксенчен тасатнă, 2 – 3 хут чĕрнĕ. Алăпах кăларнă.

Çынсем ун чухне ĕçленĕтĕк ĕçленĕ. Халăха укçи-тенкине те тŭленĕ, тыр-пулне те тонни-тоннипе панă. Тыр-пулăн укçине тытман. Ун чухне выльăха хальхи пек хывăхпа тăрантарман.

Хăйĕн ĕçне юратакан агроном правлениннче ларман. Кашни хире çитнĕ вăл. Ĕçлекен халăхпа тĕл пулнă.

Е.А. Ильинан хастар ĕçне палăртса 1957 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ», 1967 çулта «РСФСР тава тивĕçлĕ агрономĕ» ятсем панă.

Хуçалăх çĕр улми туса илессипе пысăк ŭсĕмсем тунă. Ăна хамăр çĕршыври тĕрлĕ облаçсене çеç мар, Монголие те сутнă. Çĕр улми тухăçĕ 400 центнер патне çывхарса пынă.

Ĕçри пысăк ŭсĕмсемшĕн 1971 çулта хуçалăхри И.Т. Тихонова бригадира тата Е.А. Ильинана Ленин орденĕсемпе наградăланă.

- Евтихий Андреевичпа нумай çул пĕрле ĕçлерĕмĕр, - каласа парать хисеплĕ ветеран, - хуçалăхĕ те тĕрекленчĕ, халăх пурнăçĕ те юсанчĕ. Ял çыннисене ĕçре пулăшса пынăшăн паян та тав сăмахĕ калатăп.

Еннафа Алексеевна çак хуçалăхра тĕп агрономра 1985 çулчченех вăй хучĕ.

Эпир, çак хуçалăхра нумай çул ĕçленĕскерсем, Еннафа Алексеевнана вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

В. КРЮЧКОВ.

Район судĕнче

Сутасси те, туянасси те тимлĕх ыйтать

Муркаш район сучĕ тăтăшах тĕрлĕ гражданла ĕçсене тишкерет. Вĕсем хушшинче куçман пурлăха суту-илŭ килĕшĕвĕсем туса туяннисен е сутнисен ĕçĕсем те чылай.

Акă пĕлтĕрхи июлĕн 9-мĕшĕнче В.И. Рыбкинпа З.Н. Рыбкина А.Л. Матросовапа (Е.Н. Матросов ячĕпе ĕç тунă) тата О.Ю. Матросовапа (хăйĕн ячĕпе тата ачисен ячĕпе ĕç тунă) суту-илŭ договорĕ туса Тăмкасси ялĕнче пурăнмалли çурт, çак кил хуçалăхĕнчи ытти çуртсене тата çĕрне туянаççĕ. Килĕшŭре хака 800 пин тенкĕпе палăртаççĕ. Çак суммăна Рыбкинсем тŭрех тŭлеççĕ. Анчах та кил-çурта регистрацилес ĕçре вара пăтăрмах сиксе тухать: О.Ю. Матросован çул çитмен икĕ ачине Шупашкарти хваттерĕн пайĕсене парнелени çинчен килĕшŭ пулсан çеç ялти пŭрте сутма юрать.

Шупашкарти Калинин район пуçлăхĕ О.Ю. Матросована кашни ачине хваттерĕн виççĕ саккăрмĕш пайĕ чухлĕ договор çырса парнелеме, çапла вара пĕр вăхăтрах ялти çурта сутма ирĕк паракан йышăну кăларать. Апла пулин те О.Ю. Матросова тата Е.Н. Матросов (ачасен ашшĕпе амăшĕ) çак ĕçе пурнăçлама васкамаççĕ. Рыбкинсен вара судран пулăшу ыйтмалла пулса тухать.

Муркаш район сучĕ çак ĕçе кăçал майăн 14-мĕшĕнче пăхса тухрĕ. Суд суту-илŭ килĕшĕвĕ тĕрĕс пулнине çирĕплетрĕ. Анчах та ачасем çине хваттерĕн виççĕ саккăрмĕш пайне хăйсен ирĕкĕсĕр çырма юрамастьмĕн. Калинин районĕнчи ачалăха сыхлакан пайра ачасен çĕрне сутас ыйтăва та майлă татса памаççĕ. Çапла вара Рыбкинсем пурăнмалли çуртăн тата çĕр участокĕн пĕрре-тăваттăмĕш пайĕсене туянни çинчен калакан суту-илŭ договорне тĕрĕс тесе йышăнма, 628375 тенкĕ тăкака тавăрса пама ыйтаççĕ. Е.Н. Матросов (ашшĕ) ыйтнине хирĕçлемест, анчах та О.Ю.Матросова хирĕçлет. Суту-илŭ договорне тунă чухне вăл психиатри больницинче пулнине калать. (Экспертиза çакна çирĕплетет.) Апла пулсан килĕшŭ те тĕрĕс марри çине тайăнать. Çав вăхăтра хĕрарăм упăшкинчен уйрăлманнине пула тăкака упăшкин те тавăрса памалли çинчен ыйтать.

Анчах та 800 пин тенкĕне вăл илнĕ. 2007 çулхи август уйăхĕнчен пуçласа вăл упăшкипе пĕрле пурăнман. Хальхи вăхăтра вăл хăйĕн ĕçĕсемшĕн ответ тытма пултарать. Çавăнпа та суд О.Ю. Матросован ыйтăвне тивĕçтермест.

Çак ĕçе тĕслĕх вырăнне илсе çынсене куçман пурлăхпа суту-илŭ тăвассинче тимлĕ пулма ыйтас килет.

Э. СТЕПАНОВА,
Муркаш район сучĕн судйи.

Йăла-йĕрке

Илем кунĕ

Августăн 2-мĕшне мĕн пĕчĕкренпех Илем кунĕ тенипе пĕлетпĕр. Çак кун çĕнĕ çĕр улми кăларса çемйипех сĕтел хушшине ларса çинĕ. Илем кунĕччен çĕр улми кăларма юраман.

Илем кунĕн – Илле праçникĕн – хăйĕн историйĕ. Израильте виçĕ çул таранах çумăр çуман. Выçлăх пулнă. Турра ĕненекенсем Кармил тăвĕ çине пухăнса вăкăр пуснă. Илия пророк Турра кĕл тунă та, Турă çĕр çине çумăр çутарнă. Пĕтĕм çĕр çинче çимĕç пулма пуçланă.

Илия пророк нумай çул Израиль халăхĕшĕн тăрăшнă. Кирлĕ вăхăтра çумăр та çутарнă, халăха чăн Турра ĕненме йыхравланă. Турă хăвачĕпе вутлă лашасем кŭлсе, вутлă урапапа пĕлĕт çине çĕкленнĕ. Çавăн чухне аслати кĕмсĕртетни илтĕннĕ. Çапла вара аслати авăтни те Илия пророкпа çыхăннă. Аслати кĕмсĕртеттернипе çынсем çŭлти Турă пуррине пĕлнĕ. Çавăнпа ĕнтĕ аслати авăтнă чухне çынсем яланах Турра асăнса пуççапнă.

Августăн 2-мĕшĕнче Ильинкăри чиркŭ хăйĕн престол уявне паллă тунă. Турра ĕненекенсем Илия пророка чыслана.

Ваттисем Илле кун çумăр пулсан, яланах çумăр пулать, тенĕ.

Вулакан çырăвĕсем ыйтусем хускатаççĕ

Йывăç лартнин усси пултăр

Хамăн шухăшăма çыру урлă пĕлтерес терĕм-ха. Манăн сăмахăм вырăнти самоуправлени пирки. Ку теорин идеологĕ, ман шутпа, А. И. Солженицын писатель. Паян вырăнти самоуправлени пирки нумай çыраççĕ-каласаççĕ. Анчах танлаштарса пăхсан... Паян хыçа юлнă совет влаçĕ пирки ытларах хура сăрăсемпе кăна сăнлаççĕ. Анчах шутласа пăхăр-ха, çав вăхăтра тŭлевсĕр вĕренсе ятарлă е аслă пĕлŭ илнисем паян çĕршыва ертсе пымаççĕ-и, пире çĕнĕ технологисене алла илме вĕрентмеççĕ-и? Урăхла пулнă пулсан епле пулĕччĕ-ши?

Эпĕ Муркашри вăтам шкулта вĕреннĕ çулсенче (1948-1952 çулсем) шкул ачисем йывăçсем лартас ĕçе активлă хутшăнатчĕç. Вăл вырăнсенче паян вăрмансем кашланине пăхма кăмăллă. Паян та шкул ачисем йывăçсем лартассинчен пăрăнмаççĕ. Анчах... лартнă йывăçсен лаптăкĕсене пăхманран шкул ачисен ĕçĕ чĕрĕлсе вăй илеймесĕрех пĕтет. Ку вăл, ман шутпа, çамрăксем тĕлĕшпе тунă сăтăрлăх.

Акă Муркаш юхан шывĕ çинче тунă плотина çумĕнчи пĕр сăмсаха (200Х100 метр) ачасем йывăçсем лартрĕç. Анчах вĕсене йĕркеллĕ карта тытса çавăрманран нумай йывăç калчисем çулçă кăлараймасăрах вилчĕç. Çакăнта 100-150 метр тăршшĕне йĕплĕ пралук карсан унта выльăхсем пырса кĕреймĕччĕç. Çак ыйтăва вырăнти власть татса параймасть-ши?

Çакнашкал сĕнŭ пур. Ĕлĕкрех çуркунне ялти уй-хир бригадирĕсем ертсе пынипех çĕр эрозийĕпе кĕрешессипе çуркунне пысăк ĕçсем иртетчĕç. Паян çак ĕç манăça тухрĕ. Ку ĕçе паян çĕнĕлле чĕртсе ямалла. Çакăнта кашни çын, вăл пуçлăх е шкул ачи пулнине пăхмасăр, хăй тŭпине хывтăр. Кашнин ĕçне шута илни те ял хушшинче хăйне евĕр воспитани ĕçĕ. Ял халăхĕ вырăнтан тапрансан вăрман хуçалăхĕ те çак ĕçе тĕкĕ парĕ. Пĕрле тăрăшсан тавралăх татах илемленĕ.

В. МАСТЕРОВ,
ĕç ветеранĕ.

Çутă кунхи вăрăсем

Хăй вăхăтĕнче патшалăх хваттерсенче пурăнакансене дача участокĕсемпе тивĕçтерсе тĕрĕс турĕ тесе шутлатăп. Анчах халĕ çав дачăсенчи пурнăç условийĕсем çине никам та тимлĕх уйăракан çук. Çапла вара дачăсем «çŭнме» пуçларĕç. Кунпа пĕрлех вĕсенче кукăр алăсем йышланни – паянхи пурнăç чăнлăхĕ. Анчах манăçнă дачăсене саккун çитеймест пулас. Çакнашкал лару-тăрура Малиновка çывăхĕнче те хăйсен харпăрлăхĕ шутланакан нумай дача участокĕсене хуçисем пырса çŭреми е çŭрейми пулчĕç. Анчах çĕр улми тата йăрансем пулнă вырăнсенче çум ŭстернĕ вăхăтрах хăй вăхăтĕнче лартнă улма-çырла йывăççисемпе усă куракансем чылай.

Аякри çĕр лаптăкĕ çине, паллах, кашни кун çŭреме хĕнтерех. Вăхăчĕ те çитсех каяймасть. Çавăнпа усă кураççĕ те ĕнтĕ «çутă кунхи вăрăсем». Шарпаш, Токшик, Чуманкасси-Исетеркка, Отарккă, Малиновка тата ытти çывăх ялсенче пурăнакансем çак кунсенче бригади-бригадипе дача участокĕсем тăрăх çŭреççĕ. Куç умне пулнă çырласене саранча пекех тасатса каяççĕ. Дача участокне кашни кун каятăп пулин те, хăмла çырлине пĕр çырла та пуçтараймарăм ку таранччен. Пĕлес килет, çырла сунарне тухакансен совеçĕсем пур-ши? Кашнийĕнех килти хушма хуçалăхсенчи сарайĕсем хыçĕнче 40-шер сотка е ытларах та çĕрсем пур. Çавăнта çырла та ŭстереймен хресчен çĕр ĕçченĕ ята тивĕç-и?

Арçынĕ-хĕрарăмĕ дача участокĕсенче çын пахчийĕсем тăрăх çŭреççĕ. Мĕнле çынсем вĕсем? Дача участокĕсенчи сетка-рабица картасене çŭтсе илсе кайнине тата мĕнле ăнланмалла-ши?

Ăнланатпăр, кашни дача участокне милиционер тăратма çук. Çапах та йĕрке хуралçисен дачăсенчи йĕрке çине те тимлĕх уйăрсан аван пулмалла!

Дача хуçисем.